Çĕр ĕçченĕ килти хушма хуçалăхра

# «Ĕмĕтленни ума килчĕ. Тавах Турра!»

Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр. Ваттисем çапла калани тĕрĕсе килнипе иртнĕ кунсенче Чурикассипе Кораккасси тăрăхне çитсен тепĕр хут тĕл пултăм. Тĕл пултăм та ĕçчен çынсен ăнăçăвĕшĕн савăнтăм, вĕсем йывăрлăхсене пăхмасăрах ялта та ăнăçлă пурăнма пултарнине пăхса хĕпĕртерĕм, çĕнĕ шухăшсемпе киле таврăнтăм.

## Пичче маттуртарах

Валерий Семенович мана виноград аркки витĕр тухса кĕтсе илчĕ. Манăн тĕллеве пĕлсен пиччĕшĕ кÿршĕ ялта – Кораккассинче пурăннине пĕлтерчĕ, унта илсе çитерме пулчĕ. Кĕске калаçурах Кондратьевсем чăн-чăн çĕр ĕçченĕсем пулни курăнчĕ. Çакна пуян сад-пахча çирĕплетет. Пÿрт-çурт таврашĕпех чечексем, тĕрлĕ йывăç тĕммисем – пĕр тăваткал метр та пушă выртмасть.

– Çĕр çинче эпир мĕнле ĕçлетпĕр – вăл пире çапла тăрантарать. Çак чăнлăха эпир çемйипех пăхăнса ĕçлетпĕр, атте-анне кил-çуртне сÿнме памастпăр, – хăюллăн калаçать кил хуçи мана пан улмипе йăтăнса ларакан улмуççисемлĕ сад тăрăх ертсе кайнă май.

Тирпейлĕх тата сад ĕçĕн культури кашни утăмрах: тинтерех кăларнă суханпа ыхра вырăнĕсем, тулăх тухăç шантаракан кишĕр, купăста, хĕрлĕ кăшман, хăяр йăранĕсем, çĕр улми. Вĕсемпе юнашарах пан улми, груша йывăççисемпе вĕсен сулхăнĕнчи вĕллесем. Пахча хуртсен «юррипе» кĕрлесе кăна тăрать.

Кондратьевсен ашшĕпе амăшĕ (йывăр тăприсем çăмăл пулччăр) тăватă ывăл çуратса ÿстернĕ. Паян вĕсенчен виççĕшĕ пурăнаççĕ: Коля, Леня, Валера. Вăталăххи Муркашра хватТерте тĕпленнĕ пулсан, Николайпа Валерий ялтах йăва çавăрнă.

– Асаттерен аттене юлнă сад эпир ача чухнех пуянччĕ. 40 улмуççи ытлаччĕ унта. 1979 çулхи хаяр сивĕсем хыççăн вĕсенчен икĕ улмуççи кăна юлчĕ. Аттепе анне епле кулянни халĕ те куç умĕнче. Аслисен ĕçне сÿнме памалла мар терĕмĕр эпир те ун чух. Çапла вара аттепе пĕрле çĕнĕ сад чĕртме пуçларăмăр. Вăрăран улмуççи çитĕнтересси çавăн чух пуçланчĕ те ĕнтĕ. Паян пахчара вуншар тĕрлĕ улмуççи, чие-слива, шултра облепиха, кашкăр çырли (жимолость), абрикос, виноград т. ыт. те. Çапах пиччене çитейместĕп-ха. Вăл маттуртарах, – ăнлантарать В. Кондратьев садпа иртнĕ май.

## Николай

Çырма урлă каççан кÿршĕ яла кĕтĕмĕр. Кораккасси – Атăл хĕрринчи пысăках мар ял. Кунта, тĕпрен илсен, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче ĕçлекенсем тĕпленнĕ. Пĕрин хуçалăхĕ тепринчен хăтлăрах. Пахчисем те чухăн марри урамранах курăнать. Николай Семенович Кондратьевсен тĕлне çитсен вара ку хуçалăх иттисенчен уйрăлса тăнине пĕрре пăхсах ăнлантăм.



– Мухтанмалли нимĕн те çук. Ĕçлесе çитерейместпĕр. Тирпейсĕрлĕхе хак паратăри? – питрен кулă ямасăр ыйтуллăн калаçрĕ кил хуçи арăмĕ Алина Германовна. – Кашни килтех сад пур, кашниех хăй тĕллĕн ăста.

Йытă вĕрнипе тата мăшăрĕ калаçнине илтсе пахчаран кĕнĕ вăтам çулсенчи кĕрнек кĕлеткеллĕ арçын та пирĕн тĕллеве çийĕнчех ырламарĕ. Анчах... Сăмах çумне сăмах хушса пирĕн калаçу рете кĕрсе кайрĕ...

Кунти Кондратьевсем пĕччен кинемей кил-çурчĕ вырăнĕнче 1978 çулта йăва çавăрнă. Çавăнтанпа кунти пурнăç кăткă тĕмми пек ĕçпе шавласа тăрать.

– Хурт-хăмăрçăсем пулатпăр тесе шутламан эпир, анчах пурнăç хăй çавăн патне илсе пычĕ. Эпĕ çамрăкрах чух пулла çÿреме юратнă. Ирпе те, каçпа та вăхăта кÿлĕ хĕрринче ирттереттĕм. Мăшăра килĕшместчĕ çакă. Пĕрмаях ÿпкелешетчĕ. Анчах пĕррехинче... – мăшăрĕ çине ăшă куçсемпе самантлăха пăхса илчĕ Николай Семенович. – Чăх-чĕп фабрикинчен иртерех киле таврăнтăм та, мăшăрпа кÿршĕри кинемей улмуççи çине пырса ларнă пыл хурчĕсен çемйине тытма ыйтрĕç. Хăратăп, анчах вĕсен ыйтăвне татса пама пĕрремĕш утăм турăм. Çав çемьене пуçтарса илсен ялта «манăçа тухнă» вĕллепе ытти хатĕр-хĕтĕре пуçтарса Турă панă пыл хурчĕсене пахчана вырнаçтартăм. Хуртпа ĕçлеме хамăн пĕр тĕллев те пулман. Кĕнекесем алла тытрăм, утарçăсемпе канашларăм – ĕç кайрĕ, – аса илет хурт-хăмăрпа ĕçлеме пуçланă малтанхи вăхăта кил хуçи. – 1986 çулта эпĕ пулăçăран утарçă пулса тăтăм.

– Вăл тапхăр маншăн та хăйне евĕр интереслĕ пулăмпа асра юлчĕ, – калаçăва хутшăнчĕ Алина Германовна. – Пĕррехинче ирлесе Коля сăмах вакламасăрах вăлтасемпе пулла тухса кайрĕ. Чун кÿтсе килнипе умра ларакан витрене пĕрре кăна тапрăм – вăл кил хушши хапхи патнелле чанкăртаттарса кусса кайрĕ. Çав кун ĕçе çитрĕм те пĕрле ĕçлекен тата хамăр урамра пурăнакан хĕрарăмсем «сирĕн килте те витресем сас параççĕ-и-мĕн», тесе тĕксе илчĕç. Аван мар пулчĕ, паллах. Çакăн хыççăн пĕр-ик кун иртсенех эпĕ ыйтнине Турă пачĕ, мăшăра: «Пулла кайиччен пыл хурчĕ тытасчĕ хăть», – терĕм те, ĕмĕтленни ума килчĕ.

Куç хăрать те алă тăвать. Пĕччен кинемей кил-çуртне уйрăлса тухнă чух пахчара пĕртен-пĕр улмуççи çеç пулнă пулсан, паян çав сада палласа та илейместĕн. Улмуççипе ĕçлес юрату ăруран ăрăва куçнипе-тăр Николай та çĕнĕ çĕрте тĕпленсен пахчана улмуççисем лартассине малти вырăна кăларнă. «Малтан нумай лартса. Халĕ йĕркене кĕртрĕм: çуллен виçĕ улмуççи лартатăп. Пахчара вырăн юлмарĕ те хамăн юратăва пахча тулашне кăлартăм. Халĕ урамра та, пахча хыçĕнче те улмуççисем пайтах», – кăмăллăн калаçать Николай Семенович. Çак ĕçре мăшăрĕ чăн-чăн пулăшуçă. Вăл улмуççи, груша вăррисем акса ÿстерет. Николайпа ачисем пулăшнипе вĕсене сыпса культурăна кĕртеççĕ. Çуркуннепе кĕркунне Кондратьевсене улмуççи тата груша хунавĕсем сутнине пасарсенче тăтăшах курма пулать.

Калаçăва пыл хурчĕсем çинех пăратăп.

– Пахчара миçе вĕллине пĕлместĕп те. Манăн тĕллев – пĕри те пушă ан лартăр, пыл хурчĕсем ан чирлеччĕр, çынсем пĕр-пĕрне ырă сунччăр. Пыл хурчĕсем вĕсем ĕçчен çынна, хăйсене хисеплекен ĕçчене, пурнăçа юратакана пăхаççĕ. Çавăнпа та вĕлле таврашĕнче эпĕ усал сăмах калама мар, сивĕ шухăша та пуçа кĕртместĕп. Çавăнпах пулĕ хуртсем те манпа ĕçлеççĕ. Пыл хурчĕ пек ĕçченни тата тирпейли вара çук. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсене халăхра Турă кайăкĕ тенĕ, – умри пыла çăкăр çине сĕрнĕ май кăмăллăн малалла калаçать Н. Кондратьев килсе çитнĕ Роза хĕрĕ çине ăшшăн пăхса тата унăн пурнăçĕпе интересленсе.

Алина Германовнапа Николай Семенович Кондратьевсем **(сăн ÿкерчĕкре)** ывăлпа хĕр çуратса ÿстернĕ, иккĕшне те аслă пĕлÿ парса пурнăç çулĕ çине кăларнă. Ваня – программист. Роза – ветеринар. Ача чух пыл хуртĕнчен питĕ хăранă хĕр ача паян ашшĕне наукăлла сĕнÿсем парать.

– Ача чухне вĕллесемпе пыл хурчĕсем аттепе аннене ма кирлĕ-ши теттĕм. Паян вара хамăн пурнăça выльăх тухтăрĕ пулнă май вĕлле хурчĕсĕр курмастăп та, – сĕтел хушшине ларнă май сăмах хушрĕ Роза.

– Мĕнле хĕл каçаратăр-ха? – утарçăсен ăсталăхне тĕпчесе ыйтатăп хайхискерсенчен.

– Кунта та тĕрлĕ мелпе усă куратпăр. Пĕрисем пахчарах хĕл каçаççĕ. Теприсем валли ятарлă омшаник пур. Виççĕмĕшсем тĕп сакайĕнче хĕл каçаççĕ. Хĕл каçма эпир вĕсене хăйсен пылнех çителĕклĕ хăварса паратпăр, – пулчĕ Кондратьевсен хуравĕ хатĕр продукта пасара тухса сутмасăрах киле пырса туянакансен йышех çителĕклĕ пулнине палăртса.

**Анатолий БЕЛОВ.**

Кун йĕркинче

# Муниципаллă пушар хуралĕсем пулаççĕ

***Хăрушсăрлăх ыйтăвĕсем – çулталăк тăршшĕпех куçран вĕçертмесĕр ĕçлемеллескерсем. Çу кунĕсенче вара уйрăмах çивĕчленеççĕ вĕсем. Пушар хăрушсăрлăхнех илер-ха. Ку енĕпе татăклă утăмсем тунă ĕнтĕ районта. Вĕсенчен пĕри – ял тăрăхĕсем хушшинчи муниципаллă пушар хуралĕн посчĕсене туса хуни. Ку ыйтăва патне мĕнле пырса тухни çинчен район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пай ертÿçи Н.П. Милютин акă мĕнле каласа парать:***

– Пĕр 10 çул каялла пушар хуралĕнче ĕçлекенсен кунĕнче ку сферăра ĕçлекенсем тĕрлĕрен ăмăртусенче хăйсен професси ăсталăхне кăтартса паратчĕç. Унта 37 пушар машини таран килетчĕ. Çак мероприяти пушарнăйсене пĕр-пĕрне курса малалла туртăнма пулăшатчĕ. Юлашки 2 çул хушшинче ăна туса ирттереймерĕмĕр. Пушар машинисем те кивелсе кайрĕç, вĕсене тытса тăракан хуçалăхсенче те лару-тăру пĕр пек мар. Çавăнпа та пур пушар машинисене упраса хăварас, вĕсемпе кирлĕ пек усă курас тĕллевпе темиçе ял тăрăхĕн вăйĕсене пĕрлештерсе, ял тăрăхĕсем хушшинчи муниципаллă пушар хуралĕн посчĕсене йĕркелеме шутларăмăр.

Пушар хăрушсăрлăхĕн енĕпе чи йывăр ыйту Ярославка ял тăрăхĕнче пулнă, мĕншĕн тесен инкек-мĕн пулас пулсан, кунта пушар машинисене Муркашран çитме те инçе, Мăн Сĕнтĕртен те çывăхах мар. Халĕ ку енĕпе кунта лав вырăнтан тапраннă ĕнтĕ. Пуçланă ĕçе вĕçлемелле кăна.

Çакăн пек пушар хуралĕн посчĕсем районĕпе пурĕ 3 çĕрте пулмалла: тепĕр иккĕшĕ – Мăн Сĕнтĕрпе Йÿçкассинче. Вĕсенче ку ĕç вĕçленнĕпе пĕрех.

**– Вĕсен ĕçне кам тата мĕнле йĕркелесе пырать?**

– Ку тĕлĕшпе республикăри пушар службин организацийĕпе тата «Ударник» хуçалăхпа килĕшÿ турăмăр. Çапла вара Мăн Сĕнтĕрти пушар деповĕ республикăри пушар службин организацийĕн, Йÿçкассинчи – «Ударник» хуçалăхăн. Машинăсене юсамалла-и, çунтармалли-сĕрмелли материалсем кирлĕ-и – ку тата ытти ыйтусене те вĕсемех татса параççĕ. Пушар машинисен водителĕсене вара ял тăрăхĕн бюджечĕн укçи-тенкипе тытса тăраççĕ.

**Кăçалхи 7 уйăхра районта пурĕ 23 пушар пулнă. Вĕсенчен 21-шĕ – уйрăм çынсен хуçалăхĕнче. Çакă тепĕр хут ял çыннисемпе тачă çыхăнса ĕçлемеллине кăтартса парать. Ку енĕпе ĕç-пуç епле пынине Николай Панфилович çапла палăртать:**

– Иртнĕ çул кашни ял тăрăхĕнчи кашни ялтах ирĕклĕ пушар хуралĕн членĕсене суйланă. Чăваш Республикин чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн вĕрентÿ центрĕн преподавателĕсем района килсе кăçал вĕсемпе вĕрентÿ ирттерчĕç. Вĕрентÿ курсĕсенче çавăн пекех социаллă сфера учрежденийĕсен ертÿçисем те пулчĕç. Хăйсем мĕн вĕреннине хăйсен коллективĕсенче вĕрентеççĕ.

Ял пухăвĕсенче те хускататпăр ку ыйтăва. Унсăр пуçне «Çурт-йĕр – 2009» операцие хутшăнса, пушар хуралĕн ĕçченĕсем ял тăрăхĕсен специалисчĕсемпе пĕрле талăкĕпех ĕçлекен 142 учреждение комплекслă майпа тĕрĕсленĕ. Пушар хăрушсăрлăх тĕлĕшпе ăнăçсăр çемьесенче пулнă, правилăсене мĕнле пăхăннипе кăсăкланнă.

**– Тавах, Николай Панфилович, калаçушăн.**

**Л.ПАВЛОВА калаçнă.**

Шăмат кунхи рубрика

# Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

***Паянхи рубрикăна районти шалти ĕçсен пайĕн аслă дознавателĕ, милици майорĕ Лариса Александровна ЯДЫКОВА ертсе пырать.***

## Эрех ĕçсен, алă çĕклесен...

**Пĕлес килет, Муркашри Парковая урамра пурăнакан А. Ефремов хăйĕн мăшăрне хĕненĕшĕн саккун умĕнче явап тытĕ-ши?**

**П. СЯДАРОВ.**

Çапла, саккуна пăхăнасси пур ĕçре те пур. Ефремовсен тĕслĕхĕнче те вăл айккинче юлмасть. Ку ĕç пирки следстви ĕçĕ çакна кăтартса пачĕ. Июлĕн 8-мĕшĕнче 17-мĕш сехетре А. Ефремов хăйĕн килĕнче унчченхи мăшăрĕпе сиксе тухнă хирĕçÿре И. Егоровна юриех кĕлеткен тĕрлĕ вырăнĕсенчен тапса-çапса пĕтернĕ. Июлĕн 9-мĕшĕнче ирхи пĕр сехетре вăл каллех И. Егорова çине ÿсĕр пуçпа аллине çĕкленĕ, ыраттарас тесех тапса-çапса пĕтернĕ.

Александр Вячеславович Ефремов РФ Уголовнăй Кодексĕн 116 статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступленисен шутне лекекен «ĕçе» тунă тесе ун тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçарма тиврĕ.

## Ваннă эрех кĕленчи...

**Иртнĕ уйăхра Муркашри тĕп больницăна ваннă эрех кĕленчипе çапса амантнă çынна илсе пычĕç. Мĕн пулнă-ши? Тата явапли саккун умĕнче мĕнле ответ тытĕ-ши е тытрĕ?**

**Хаçат редакцине килнĕ çыруран.**

Вулавçăсем ыйтакан тĕслĕх-инкек районта чăнласах пулнă. 2009 çулхи июлĕн 10-мĕшĕнче 21 сехет тĕлĕнче Калайкассипе Кораккасси ялĕсем хушшинчи çырмара эрех ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ арçын хăйсем хушшинчи килĕшмен сăмахшăн пĕрле пулнă юлташне ватса çĕмĕрнĕ эрех кĕленчин анипе пуçран тата мăйран икĕ хутчен çапать, амантать. Инкек тÿсекене çийĕнчех Муркашри тĕп больницăна илсе çитереççĕ. Вăхăтлă пулăшу уншăн пысăк хăрушлăха ирттерсе янă ĕнтĕ, анчах юлташĕ çине ванчăк кĕленчепе ыткăннă арçыннăн саккун умĕнче явап тытма тивĕ. Ун тĕлĕшпе Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 115-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступление тунă тесе уголовнăй ĕç пуçартăмăр.

Эрех ырри патне çитерменни çак тĕслĕхре те яр уççăн курăнать.

## Телефон вăрланăшăн

**Кĕсье телефонĕ вăрлакансене милици ĕçченĕсем тытнă тĕслĕхсем пур-и тата вĕсене мĕнле айăплаççĕ?**

**Телефонпа шăнкăравланинчен.**

Кĕсье телефонне вăрлани те саккуна пăснă тĕслĕх шутланать. Çак çул çине тăраканăн уголовнăй майпа ответ тытма тивет. Шалти ĕçсен практикинче кунашкал тĕслĕхсем пĕрре çеç мар. Акă июлĕн 14-мĕшĕнче 17-мĕш сехетре маларах çеç юлташне ваннă эрех кĕленчипе çапса-чиксе амантнă арçын хăй инкек тÿстернĕ арçын патне «каçару» ыйтма пырсан хирурги уйрăмĕнчи палатăран çынсен куçĕ умĕнчех больницăра выртакан тепĕр арçыннăнне вырăн çинче выртакан «Моторола Ц-350» кĕсье телефонне «уралантарать». Çапла хăтланса вăл чирлĕ çынна 1200 тенкĕ тăкак кÿрет. Анчах усал ĕç çийĕнчех тăрă шыв çине тухать. Çак «харсăр» арçын пирки çийĕнчех Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 161-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступление тунă тесе уголовнăй ĕç пуçартăмăр.

Кĕсье телефонĕн ĕçĕ мĕнпе вĕçленессине район сучĕ татса парĕ. Халĕ следстви ĕçĕ малалла пырать.

## Хĕрарăм хĕрарăма хĕнет

**Çу пуçламăшĕнчех пулчĕ-ха ку ĕç. Çĕньял Муркашра икĕ хĕрарăм вăрçса кайнăччĕ. Эльза (ятне улăштарнă) хăйсем хушшинче калаççа татса пама май тупайман ĕçе чышкăпа пăнчă лартма шутланă пулас: пирĕн тăвана хытах хĕнесе тăкнă. Ку ĕçе милицисем те пĕлеççĕ. Анчах вĕсен следстви ĕçĕ мĕнле пырать-ши?**

**Тăванĕсем.**

Çапла, кунашкал тĕслĕх Çĕньял Муркашра кăçалхи июнĕн 17-мĕшĕнче 18 сехет тĕлĕнче пулса иртнĕ. Э. гражданкăпа Л. гражданка хăйсем хушшинче сăмахпа татса парайман ыйтăва чышкă çине куçарнă. Чăнах та пĕрремĕшĕ теприне ыраттарас тесех алăпа-урапа нумай çĕртен тапса-çапса пĕтернĕ. Э. гражданка хăтланăвĕсенче Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 116-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступлени курăнать тесе ĕçлеме пуçларăмăр. Дознани вăхăчĕ июлĕн 27-мĕшĕнче тухнăран çак вăхăта августăн 24-мĕшĕччен тăсма ыйтса прокурор патне тухрăмăр. Ĕç малалла пырать. Саккуна пăсакан ответ тытасса шанатăп.

Следстви комитетĕнчен

# Эрех – инкек çăл куçĕ

Преступленисене уçса парассипе ĕçлени çын сывлăхне хирĕç тунă йывăр тата уйрăмах йывăр ĕçсене преступниксем ÿсĕрле тунине кăтартса парать. Çулталăк пуçланнăранпа пирĕн пай следователĕсемпе милици ĕçченĕсем суррогат реализацилекен 10 преступление уçса пачĕç. Вĕсенчен çиччĕшĕ пирки ĕçсене суда янă та ĕнтĕ.

Вăрттăн эрех сутса укça тăвас тени уголовнăй ĕç шутланать. Уншăн РФ УК 238-мĕш статйипе ответ тытмалла пулать.

**С. САВЕЛЬЕВ,**
**Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн ертÿçи.**